**Йывăççем лартассин тата тавралăха тирпей-илем кĕртессин уйăхлăхĕ**

# Çĕр çине юратса, савăнса пăхмалла



**73 çулхи сад ăсти хăй сыпакан кашни улмуççие чун ăшшин пĕр пайне парать.**

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).**

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

Константин Лукич совет саманинче çуралса ӳснĕ çын. Ашшĕ-амăшĕ пысăк пуçлăх мар, колхозниксем пулнă пулсан та, хăйсен ĕçĕнче тепĕр пуçлăхран та irттернĕ: çĕр ĕçне юратнă, вăл тăрантаракан пулнине пĕлнĕ, ачисене те çавна хăнăхтарнă, йăх-несĕл пурнăçĕпе паллаштарнă.

– Хам çинчен каличчен йăх-несĕл тымарĕпе паллаштарамха. Унта-çке пирĕн йывăç лартма юратман çын пулман. Çак юрату пирĕн юнра ĕнтĕ, нимĕн те тăвайрас çук. Атте ашшĕнчен 8 çулта юлнă та 12 çулта суха пуç тытнă. Тырă акса ӳстернипе пĕрлех йывăççем лартассипе хăйĕн ватă аслашшĕн – пĕчĕк Петĕрĕн – ĕçне малалла тăснă. Унăн çĕрĕ çинче ӳснĕ вăрмана паян ял çыннисем Пĕчĕк Петĕрĕн вăрманĕ тесе хисеплеççĕ, пушă вăхăтра çырлана-кăмпана çӳреççĕ. Çакă мана та йывăç лартма хавхалантарчĕ, – каласа парать йывăç лартас юрату ăçтан пуçланни пирки ыйтсан Кĕçтенкке мучи амăшĕ енчен те кукашшĕ йывăç лартма сатурскер пулнине тата вăл хăйне йывăçа юратма вĕрентнине, ачалла çуралнă юратупа иртнĕ ĕмĕрти 80-мĕш çулсем вăрринче Горбачевпа пĕрле çĕршыва çĕн йĕркелӳ варкăшĕ килсе кĕрсен хăйĕн ячĕпе сад тума шухăш çуралнине палăртса.

Çĕнни вăл пурнăçа çăмăллăн кĕмест çав. Нискасси тăрăхне те çĕн йĕркелӳ тапхăрĕ тăрукках килсе тымар яраймасть. 90-мĕш çулсем пуçламăшĕнче ял çыннисен хушма хуçалăхĕсене аталантарма 60-шар сотка çĕр пама пуçласан та ку çĕнĕлĕх тикĕссĕн пурнăçа кĕнĕ тесе калама çук. Çак çĕнĕлĕхе малтан алла илме тăнисен уншăн пĕр уйăх çеç мар кабинетсем тăрăх чупма тивнĕ. Вĕçне çитсен те çĕрсем килтен катара, вăрмансем çывăхне вырнаçнă, каярах сăрт çамкисенче "вырăн усăлнă". Çак юлашки "çĕнĕлĕх" Кĕçтенкке мучире хăйĕн тĕллевне пурнăçланмалла мар пулăм текен шухăша сирсе ярать. Сăртăн аял енче вăрман чĕртĕп, çӳлерех сад тăвăп, вар хушшинче пĕве туса пулă ĕрчетĕп тесе Константин Лукич 1998 çулта хăй пăхса хунă çĕре виçтерет, тепĕр çулхине пĕрремĕш йывăççем лартать. Ун чухне вырăн тупнă хырсемпе чăрăшсем, юман та каврăç, вĕрене паян çынран çӳллĕ ӳссе кайнă ĕнтĕ. Çут çанталăк тусĕн паян кунта 2,56 гектар çĕр. Çамрăк вăрмантан çӳл еннерех никĕсленнĕ сад кунта тепĕр 5-6 çултан ял ачисем валли пĕрремĕш пан улмисем, грушăсем, сливăсемпе чиесем парасси пирки иккĕленӳ çук. Выльăхсене кĕртсе ярса хуçса тăкас марччĕ çеç.

Хăйĕн малтанхи тĕллевне пурнăçласа 2002 çулхине Константин Лукич хăйĕн вăйĕпе Потап варĕнче икĕ пĕве пĕвелет, Куславкка районĕнчи Карамышевăри пулă ĕрчетекен хуçалăхран хăйĕн укçипе 3-4 тĕрлĕ пулă туянса килсе пĕвесене ярать. Анчах ямăттине хапсăнма юратакансем-и е çынна кĕвĕçекенсем-ши, пĕррехинче (мĕнле совеç çитерсе-ши) пĕр плотинине наркăмăш яраççĕ, тепринчен пулă сĕрекепе сĕрсе кăлараççĕ – калама чĕлхе çаврăнмасть. Çапах та Кĕçтенкке мучи аллине усмасть, çынсем хăйсен шухăшне улăштарасса ĕненет. Çак шухăш-ĕмĕтпех вăл кăçал кунта татах ăратлă пулă килсе яма ĕмĕтленет. Кӳлĕ тăвасси пирки 9 çул шутланă хыççăн ĕмĕте пурнăçа кĕртни ăна алă усма памасть: ара, çулсем иртнĕ май пирĕн хамăр çинчен çеç мар, ачамăрсем пирки те шутламалла, хамăр хыççăн вĕсем валли мĕн хăваратпăр? Паян вара кӳлĕсем хыçĕнче К.Водянов хăй шутласа тунă пăрăхпа тухакан шыв пысăк çăл куç пек тапса тăрать. Ку та хăйне евĕр илем. Çак тăрăхри пĕтĕмĕшле илеме йĕркелеме тата ăна пулас ăрусем валли сыхласа хăварма Кĕçтенкке мучи паян хăйне панă 2,56 гектар çĕре 49 çуллăха арендăна илессипе ĕçлет.

Константин Лукича хут вĕренмен çын теейместĕн. Нискассинчи шкулта 7 класс вĕренсе пĕтернĕ Кĕçтук Сĕнтĕрвăрринчи вăрман техникумне вĕренме кайма шухăш тытать, анчах экзамен тытайманнипе Нискасси каччи яла таврăнать, çĕр ĕçне кӳлĕнет. "Атте мана питĕ вĕрентесшĕнччĕ, анчах ку çул мана валли пулаймарĕ пулас. Ара, çĕр çинче ĕçлеме çуралнă çын вăл пĕлĕтре вĕçеймест вĕт",– ăшшăн кулса калаçать паян иртни пирки пĕртте кулянмасăр, ырри не çеç шанса йывăç лартакан Константин Лукич Водянов ĕç ĕмĕрĕнче пĕр çул мар çур аки, вырма irттерни çинчен каласа панă май. Çак калаçу вăхăтĕнче çĕр ĕçне чунĕпе парăннă хресченĕн куçĕсем юнашарти хиртен каймарĕç. Ара, кунпа мар, сехетпе çур аки çывхарать-çке.

Кĕçтенкке мучи çарта пулнă, 1953 çулта çемье çавăрнă, мăшăрĕпе тăватă ача çуратса ӳстернĕ, ĕç ĕмĕрĕнче тракторпа тата "хир карапĕпе" чылай эталон-гектар ĕç пурнăçланă. Çĕр çинче çакнашкал çынсем пурришĕн епле чун савăнмĕ-ха. Ырă вăрлăх çимĕçĕ те ырă пуласси пирки вара никамăн та иккĕленӳ çук. Кунта К.Водянован "Çĕр çине юратса пăхмалла. Вăл пурришĕн савăнмалла, ăна хисеплемелле" тенĕ каларăшне мала кăларас килет манăн. Çапла пултăрччĕ те.



**Çут çанталăк тусĕ алăпа пĕвеленĕ пĕвере паян тĕрлĕ тĕслĕ пулă ĕрчет. Кунти пуянлăх çынсемшĕн хăйне евĕр урăх тĕнче.**

Паллашрăмăр. Манăн çĕнĕ пĕлĕш Нискассинче 1934 çулта çуралса ӳснĕ Константин Лукич Водянов пулчĕ. Ман умра 73 çулхи асатте тăрать тесе калама ниепле те сăмах çаврăнмасть. Хăйĕн пурнăçне çут çанталăка юратса irттернĕренех тăр вăр-варлăхĕпе тепĕр ачаран та сатуртарах Константин Лукича çавăн чухлĕ çул пама çуках. Çулсем иртнине пăхмасăрах, умри йывăрлăхсене çĕнтерсех вăл пурнăç улшăнăвĕпе тан пыма тăрăшни сисĕнет. Пĕрле пулса йĕркипе йĕрлер-и-ха Константин Лукичăн пурнăçне, унăн шкулне? Нискасси тăрăхĕнчи 99 сăртран (сăртлă вырăна ялта çапла калаççĕ) пĕрне хăй харпăрлăхне илсе ун çинче вăрман, сад никĕслесе юнашар Потап варĕнче хăй аллипе икĕ пĕчĕк кӳлĕ туса пулă ĕрчетме пуçласа ку ене çĕнĕ сăн кĕртнĕ çын пирки камăн тĕплĕнрех пĕлес килмĕха? Кашни ялта кун пеккисем пилĕк çын пулсан, çырма-çатраллă Муркаш ен тахçанах кӳлĕсен ытамĕнче выртмаллаччĕ, шыв эрозийĕ вара асра çеç юлмаллаччĕ. Анчах... Çĕр ишĕлĕвĕнчен паян пирĕн тăрăхри пĕр ял та пĕтĕмпех хӳтĕленеймен-ха. Апла пулсан йывăççем лартасси, çырма-çатрара пĕве-плотинăсем тăвасси паян кашнин кун йĕркинчех тăрать. Вăхăт çухатас марччĕ çеç.



**Йывăç тусĕпе К. Водяновпа пĕрле район администрацийĕн çут çанталăк хӳтĕлевĕпе ĕçлекен тĕп специалисчĕ Г.Симаков туслăх йывăççи лартнă самантра.**

**Анатолий БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

## Официально

**График**
**проведения публичных слушаний по проекту решений о внесении изменений и дополнений в Уставы сельских поселений Моргаушского района Чувашской Республики**

| № | Наименование | Дата проведения заседаний Собраний депутатов (о проведении публичных слушаний) | Дата проведения публичных слушаний | Место проведения | Время проведения |
|---|---|---|---|---|---|
| 1. | Ярославское | 18.04.2007 | 17.05.2007 | Ярославский сельский Дом культуры | 13.00 |
| 2. | Юнгинское | 18.04.2007 | 17.05.2007 | Юнгинский сельский Дом культуры | 14.30 |
| 3. | Москакасинское | 18.04.2007 | 17.05.2007 | Москакасинский сельский Дом культуры | 13.00 |
| 4. | Тораевское | 18.04.2007 | 17.05.2007 | Тораевский Дом культуры | 13.00 |
| 5. | Ильинское | 18.04.2007 | 17.05.2007 | Тренькинский сельский Дом культуры | 10.00 |
| 6. | Моргаушское | 18.04.2007 | 17.05.2007 | Районный Дом культуры | 14.00 |
| 7. | Чуманкасинское | 18.04.2007 | 17.05.2007 | Зал заседаний СПК им. Чапаева | 14.00 |
| 8. | Ярабайкасинское | 18.04.2007 | 17.05.2007 | Ярабайкасинский сельский Дом культуры | 12.00 |
| 9. | Сятракасинское | 19.04.2007 | 17.05.2007 | Ятманкинский сельский Дом культуры | 10.00 |
| 10. | Кадикасинское | 19.04.2007 | 17.05.2007 | Зал заседаний РГУП «ПФ «Моргаушская» | 12.00 |
| 11. | Б.Сундырское | 19.04.2007 | 17.05.2007 | Б.Сундырский сельский Дом культуры | 18.00 |
| 12. | Шатьмапосинское | 19.04.2007 | 17.05.2007 | Шатьмапосинский сельский Дом культуры | 15.00 |
| 13. | Юськасинское | 19.04.2007 | 17.05.2007 | Юськасинский сельский Дом культуры | 15.00 |
| 14. | Александровское | 19.04.2007 | 17.05.2007 | Васькинский Дом культуры | 14.00 |
| 15. | Хорнойское | 19.04.2007 | 17.05.2007 | Зал заседаний СХПК им. Ленина | 9.00 |
| 16. | Орининское | 19.04.2007 | 17.05.2007 | Зал заседаний СПК «Оринино» | 15.00 |

## Йĕркелĕх – хамăршăн

# Хăвăр ирĕкпе панă хĕç-пăшалшăн – хавхалантару

Хĕç-пăшал, сирпĕтмелли хутăшсем, сирпĕнекен веществосем, çар тата сирпĕтмелли хатĕрсем упранни кулленхи пурнăçра хăрушлăх кăларса тăратма пултараççĕ. Çавăнпа та вĕсенчен вăхăтра, хăвăр ирĕкпе хăтăлни йĕркелĕхе сыхласа хăварма май парĕ.

Саккуна пăсса хĕç-пăшала, сирпĕтмелли хутăшсене, çар тата сирпĕтмелли хатĕрсене хăвăрпа илсе çӳренĕшĕн, вĕсемпе суту-илӳ тунăшăн Раççей Федерацийĕн УК 222 статйипе килĕшӳллĕн уголовнăй майпа явап тыттараççĕ, виçĕ çул таран ирĕкрен хăтараççĕ. Çавăн пекех хĕç-пăшалпа урăх çынна усă курма май туса панăшăн, тирпейсĕр упранăшăн РФ УК 224 статйипе килĕшӳллĕн пĕр çул таран ирĕкрен хăтараççĕ. Апла пулсан вăл е ку хĕç-пăшала шалти ĕçсен пайне панине нимĕн те çитмест. Пурнăçра тӳнтерле пулăм пулса тухсан кăна аса илни вара чавса çывăх та çыртма çук тенине пĕлтерĕ.

Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн 2006 çулхи февралĕн 14-мĕшĕнчи 36 № постановленийĕпе килĕшӳллĕн, хăвăр ирĕкпе панă çӳлерех асăннă хĕç-пăшалшăн укçан хавхалантарма палăртнă. Вĕсен хакĕсем çакăн пек:

– сунара çӳремелли нарезной кĕпçеллĕ пăшалшăн – 300-700 тенкĕ;

– сунара çӳремелли яка кĕпçеллĕ пăшалшăн – 100-300 тенкĕ;

– çар пăшалĕшĕн – 500-1000 тенкĕ;

– хăвăр ăсталанă перекен пăшалшăн (обрез) – 100-300 тенкĕ;

– гранатăшăн, минăшăн, снарядшăн – 300-500 тенкĕ;

– сирпĕтмелли хатĕршĕн – 200-400 тенкĕ;

– çар хатĕрĕшĕн (боеприпасы) – 5 тенкĕ;

– сирпĕнекен веществошăн – 300-500 тенкĕ.

Вăйра тăракан саккунпа килĕшӳллĕн çӳлерех асăннă хĕç-пăшала хăвăр ирĕкпе паратăр пулсан, уголовнăй майпа явап тыттармаççĕ, енчен те вăл е ку преступленире усă курман пулсан. Саккуна пăсса упранакан тĕрлĕ йышши хĕç-пăшал упранни пирки тĕрĕс информаци панине те ырласа йышăнаççĕ, çӳлерех асăннă хаксен 50 процентне парса хавхалантараççĕ. Çавăнпа та саккуна пăсса упранакан çӳлерех асăннă хĕç-пăшал пирки пĕр тăхтаса тăмасăр милицин участокри уполномоченнăйĕсене, шалти ĕçсен пайне 02 е 2-16-67 номерсемпе шăнкăравласа пĕлтерме пултаратăр.

**В. ГРИГОРЬЕВ,**
**милици подполковникĕ, районти обществăлла хăрушсăрлăх милицийĕн ертӳçи.**

## Çур аки

# Техника вăхăтсăр юрăхсăра тухать. Мĕншĕн?..

Умра тăракан çур аки ыйтăвĕсемпе тата ял хуçалăх техникипе интересленнĕ май вăрăмах мар çула тухрăм. Пысăк хисепре тăракан пĕр хуçалăхăн юсав мастерскойне кĕрсе тухрăм. Хуçалăх ятне статьяра асăнма кирлех мар тесе шутлатăп.

Юсав мастерскойне кĕрсен, хамăн куçа ĕненмесĕр, тĕлĕнсе пăхса тăратăп. Кунта ДТ-75 маркăллă тракторсен юрăхсăра тухнипе кăларса пăрахнă балансирсем купипех выртаççĕ. Мана курса, пĕр механизатор ман ума пырса тăчĕ.

Эпĕ механизатортан ыйтатăп: "Сирĕн ăçтан пухăнса тулнă вара кун чухлĕ балансир?" "Вĕсене вăхăтра юсама тата регулировкăсем туса пыма вăхăт çук. Йăтăнса ансан, вĕсене кăларатпăр та пăрахатпăр. Çав сăлтава пула ĕнтĕ вĕсем çакăнта купаланса выртаççĕ. Вĕсем çакăнта кăна мар, тул енче те нумай сапаланса выртаççĕ", – хурав пулчĕ механизаторăн.

Пăхатăп та, юсав мастерскойĕнче тракторсем юсавра лараççĕ. Трактористсемпе калаçатăп. "Балансирсене юсаса регулировка тума, вĕсене шыраса тупма та питĕ хĕн. Вĕсем пĕтĕмпех лапра айĕнче. Техникăна çуса тасатма вырăн çук пирĕн. Лапра ăшĕнче юсатпăр эпир техникăна", – тарăхнипе хумханса хуравларĕ механизатор.

Трактор бригадине нумай çул ертсе пынă эпĕ. Техникăна тĕпрен юсама вĕсене малтан çуса тасатнă. Трактор балансирĕсем вăхăтсăр юрăхсăра тухнисем пирĕн пулман. Вăхăтра юсаса, регулировка тунă эпир. Эпĕ çакна каласа хăварасшăн. Балансирсенче çирĕп конуслă роликлă подшипниксем лараççĕ. Вĕсене вăхăтра регулировка туса тăрсан, вĕсем нумай вăхăт ĕçлеме пултараççĕ, юрăхсăра тухмаççĕ. Вĕсене вăхăтра регулировка туса, вăхăтра çу ярса тăни питĕ кирлĕ. Мĕншĕн тесен тракторăн пĕтĕм йывăрăшĕ балансирсем çинче. Çакна пĕлмеççĕ пулас паянхи инженерсем. Вĕсен айăпĕпе балансирсем вăхăтсăр юрăхсăра тухаççĕ тени тĕрĕс пулать. Паллах, трактористсен ответлăхне те аякка сирместĕп. Хуçалăх кассси те çӳхелет.

Пĕр-ик сăмах контроль пирки. Пирĕн вăхăтра инженер тата трактор бригадин бригадирĕ юсавра ĕçлекен механизаторсемпе тăтăшах пĕрле ĕçленĕ, вĕсене хушусем парса тăнă, ĕçе тĕрĕсленĕ. Çавăнпа та çирĕп йĕрке пулнă пирĕн. Юсавран тухнă тракторсем нумай вăхăт хушши ĕçлеме пултарнă. Халĕ вара пачах та тĕлĕнмелле урăхла ӳкерчĕк. Тĕслĕхрен, пирĕн вăхăтра юсавра пулнă ДТ-75 маркăллă тракторсем 2600 гектар чухлĕ ĕç пурнăçланă. Халĕ юсавран тухнă тракторсем 300 гектар чухлĕ те ĕç тăваймаççĕ, ванса каяççĕ. Мĕн шухăшлаççĕ-ши çакăн пирки паянхи инженерсем?

Çакна та асăнса хăвармалла. Юсав ĕçĕсене пачах та хутшăнман инженерсем пирки пăшăрханса калаçаççĕ эпĕ пулнă хуçалăхри механизаторсем.

Çакна эпĕ паян та лайăх астăватăп. Коммунистсен партийĕн тĕп комитечĕн пĕрремĕш секретарĕ пулнă Н. Хрущев 1953 çулта сентябрь уйăхĕнче пулнă пленумра хуçалăхсен ертӳçисене асăрхаттарса çапла каланине: "Çĕнĕ ĕç тума пуçласан, ĕçе епле пуçласа, мĕнле тумаллине практикăлла майпа малтан ертӳçĕн хăйĕн аллипе туса кăтартмалла. Çапла пулсан кăна пурнăç малалла кайĕ. Эпир малалла ертӳçĕсенчен çирĕп ыйтма пуçлатпăр". Эпĕ астăватăп, çакăн хыççăн, чăнах та, ертӳçĕсем хушшинче йĕрке çирĕпленчĕ. Çӳлти шайра халăхшăн, çĕршывшăн каланă çирĕп сăмахсем ертӳçĕсене яланах халăх хушшинче пулма, халăхпа пĕрле ĕçлеме хистерĕç. Халĕ вара малтанхи çирĕп йĕрке пăрахăçа тухрĕ курăнать. Механизаторсем каланă тăрăх, паянхи инженерсем механизаторсемпе юсав ĕçĕнче пĕрле ĕçлеме мар, лапăртанасран шикленсе юсав мастерскойне те кĕресшĕн мар. Сăмахăма малалла тăснă май хуçалăхсен инженерĕсене эпĕ чунтан çаплах калатăп. Техникăн ĕçлес ĕмĕрне тăсас тетĕр пулсан, унăн пайĕсене тĕплĕн юсаса вăхăтра регулировка туса тăмалла. Ял хуçалăх ĕçне лаша вăйĕ çине куçарма çук. Мĕншĕн тесен çĕр сийĕ пур çĕрте те чул пекех хытса ларчĕ. Çавна шута илсе хуçалăхсенчи мĕн пур техникăна упраса тăрасчĕ. Техника халĕ питĕ хаклă. Тракторсен пайĕсене тĕплĕн юсаса тата вăхăтра регулировкăсем туса тăманнипе вĕсем вăхăтсăр юрăхсăра тухса хуçалăх кассине сиен кӳреççĕ тата çур аки ĕçĕсене вăрăма тăсаççĕ. Çакна яланах асра тытасчĕ.

**В. ИВАНОВ.**

Кашмаш ялĕ.